28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 СЕНТЯБРЬ 1 ШАМАТКУН 169(6920) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

КАНАШ

Вагонсем юсакан завод начальникне тяга директор-полковникне ПОЗДНЯКОВ юлташа

ВКП(б) Центральный Комитечĕн парторгне ДМИТРИЕВ юлташа

Профсоюз завкомĕн председательне АЛТУНИН юлташа

Чăваш АССР Совнаркомĕ тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕ Канашри вагонсем юсакан завод коллективне—орденлă Чăваш республикинчи чи пысăк та малта пыракан предприятисенчен пĕрин коллективне—завод вунă çул тултарнă ятпа саламласа сывлăх сунаççĕ. Завод коллективĕ çак иртнĕ вунă çул хушшинче Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн лайăх ĕçлерĕ. 1940 çултан пуçласа завод продукци туса кăлармалли плана яланах ирттерсе тултарса пычĕ. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче завод коллективĕ, производствăна аслă латнипе пĕрлех, Тăван çĕршыва фронтăн пур заданийĕсене те пурнăçласа пырса сахал мар боевой продукци кăларчĕ. производствăна тупăш паракан турĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса завод коллективĕ çĕршыври чугун çул транспорчĕн предприятийĕсем хушшинче темиçе хутчен те малти вырăна тухрĕ, халĕ те 5 уйăх хушши ĕнтĕ Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хăй аллинче тытса тăрать. Чăваш АССР Совнаркомĕ тата ВКП(б) Обкомĕ завод коллективĕ ывăна пĕлмесĕр ĕçлесе малашне те продукци туса кăларассине тăтăшах ÿстерсе пырассине тата производствăна лайăхлатассине, çапла вара хамăрăн аслă Тăван çĕршывăн вăй-хăватне çирĕплетессине шанса тăраççĕ.

Канашри вагонниксен мухтавлă коллективне большевикла салам!

Чăваш АССР Совнаркомĕ. **ВКП(б) Чăваш Обкомĕ.**

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ

Паян пирĕн шкулсенче çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ. Кăçал вĕренÿ çулĕ пур классенче те пĕр вăхăтра пуçланмасть. Ялти шкулсенчи 5—9-мĕш классенче октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме тытăнаççĕ.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче пирĕн республикăри шкулсем СССР Совнаркомĕн 1944 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче «Шкулти вĕренÿ пахалăхне лайăхлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçласа, вĕренÿ пахалăхне ÿстерес тата ситĕнекен çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парас ĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем турĕç.

Анчах та ку çитĕнÿсем шкулсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене пытарса хăварма тата лăпланса ларма ирĕк памаççĕ-ха. Çутĕç работникĕсен республикăри канашлăвĕнче тата учительсен районсенчи канашлăвĕсенче иртнĕ вĕренÿ çулĕн итогĕсене сÿтсе явнă чухне вĕренÿ ĕçĕнче чылай ситменлĕхсем пуллине палăртнă. Иртнĕ çул эпир пурне те хут вĕрентмелли сталинла закона пурнăçа кĕртеймерĕмĕр. шкула çÿреме тивĕçлĕ пĕтĕм ачасен 98.1 процентне кăна вĕренĕве явăстарма пултартăмăр. Ку закона Калинино. Элек. Çĕрпÿ тата Вăрмар районĕсем кăна ăнăçлăн пурнăçларĕç. Кунсăр пуçне. вĕренÿ çулĕ хушшинче нумай ачасем вĕренме пăрахнă. Çакă вăл районри çутĕç пайĕсемпе шкул работникĕсем, парти. комсомол. профсоюз организацийĕсем кирлĕ пек ĕçлеменнинчен. ачасене вĕренме условисем туса паманнинчен килнĕ. Çак ситменлĕхсем кăçалхи вĕренÿ çулĕнче пулмалла мар.

Вĕренÿ çулĕ совет шкулĕн пурнăçĕнчи чи ответлă тапхăр пулса тăрать. Унăн ăнăçлăхĕ ăна мĕнле хатĕрленсе кĕтсе илнинчен нумай килет. Республикăри чылай шкулсем кăçалхи вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Акă, Муркаш районĕнче шкулсем вĕренÿ çулне мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслекен комисси 19 шкула вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленсе çитнĕ тесе йышăннă. Çак районри Тойкильтри çичĕ çул вĕренмелли шкул (директорĕ Степанов) вичĕ класс вырнаçмалăх çĕнĕ çурт туса лартнă. шкул çурчĕсене юсаса урайĕсене сăрланă. Çавăн пекех çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе Шупашкар хулинче, Ишлей, Çĕрпÿ, Советски, Красноармейски тата ытти районсенче те пысăк ĕçсем тунă. Ишлей районĕнче 13 ялта шкул çурчĕсене тĕппипех юсанă. Шкулсем валли районĕпе 2.200 кубометр вутă хатĕрленĕ. План тăрăх 8.000 экземпляр учебниксем хатĕрлемелле пулсан, кунта 14.000 экземпляр илсе хатĕрленĕ, шкул библиотекине пуянлатма 7.000 тенкелĕх çĕнĕ литературă туяннă.

Çĕрпÿ районĕнчи Сталинăри çичĕ çул вĕренмелли шкулта (директорĕ Александрова) вĕри апат организацилеме 2,5 гектар ырашпа тулă вырса пуçтарнă тата çур гектар çĕрулми лартса хăварнă.

Шупашкар хулинчи шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленме шкулсенче занятисем пĕтнĕ хыççăнах тытăнчĕç. Шкулсене вĕренÿ çулне хатĕрлес тĕлĕшпе Шупашкарти промышленность предприятийĕсемпе учрежденисем пысăк пулăшу парĕç.

Çĕрпÿ районĕнчи «Сталинпы» тата «Красная Лепсеря» колхоз членĕсем çар сыннисен çемьисен тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен ачисене пулăшас ĕçе пуçарса ячĕç. Халĕ районри пур колхозсенче те шкул ачисем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç хĕрÿллĕ пырать.

Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Ленин орденлĕ колхозпа Вăрманкассинчи «Самолет» колхозсем шкулсене таса тытса усрас тесе техничкăсене ĕçкунĕ памалла тунă тата шкул хуçалăхĕнчи тĕрлĕ ĕçсене тума колхозран пĕрер лаша уйăрса панă. Çак колхозсем шкулсенче вĕри апат организацилеме продуктсем нумай уйăрса хунă.

Анчах республикăри пур шкулсем те вĕренÿ çулне тивĕçлипех кĕтсе илчĕç теме çук-ха. Йÿçкассинчи вăтам шкул, Хăймалакассинчи, Панклари, Кашмашри çичĕ çул вĕренмелли шкулсем (Муркаш районĕ). Васликассинчи пуçламăш шкул (Ишлей районĕ). Кĕçĕн Шетмĕри çичĕ çул вĕренмелли шкул (Красноармейски районĕ) тата ытти хăшпĕр шкулсем те çĕнĕ вĕренÿ çулне кирлĕ пек хатĕрленмен. Çак шкулсенче шкул çурчĕсене юсаман. вутă та хатĕрлесе турттарман. Учебниксемпе вĕренмелли хатĕрсем те çитмеççĕ.

Шкулти вĕренÿ пахалăхне лайăхлатас тата ачасен дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕсенчех ĕçлеме тытăнмалла. Çамрăк ăрăва çирĕп пĕлÿ тата тĕрĕс воспитани парас тесен, шкул работникĕсемпе çутĕç работникĕсен СССР Совнаркомĕн «Шкулти вĕренÿ пахалăхне лайăхлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине тимлĕн пурнăçласа пымалла. Ачасене шкула çÿреме условисем туса парас пулать. Вĕсене валли. уйрăмăнах çар сыннисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен ачисем валли пур шкулсенче те вĕри апат организацилемелле.

Районри çутĕç пайĕсен шкулсене ертсе пырас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла. Инспекторсен шкула пырсан вĕренÿ ĕçне кăна мар, шкулăн хуçалăхне те тĕрĕслемелле, шкулсене пур енчен те кирлĕ пулăшу парса хăвармалла.

Пуриншĕн те паллă, шкулти вĕренÿпе воспитани ĕçĕн тĕп вăйĕ вăл учитель пулса тăрать. Ачасене вĕрентес тата воспитани парас ĕçĕн ăнăçлăхĕ учителĕн пĕлÿлĕхĕпе культурлăхĕнчен, унăн опычĕпе мастерлăхĕнчен, вăл мĕн тери тÿрĕ кăмăлпа ĕçленинчен килет. Партипе правительство учительсем хатĕрлес тата вĕсен пĕлĕвне ÿстерес ĕçе пысăк хак параççĕ. Çакна май кăçалхи вĕренÿ çулĕнче Совет Союзĕнчи 30 хулари хĕрачасен вăтам шкулĕсенче учительсем хатĕрлекен 11-мĕш класс уçалать. Çакă вăл учительсен кадрне ÿстерес ĕçре пысăк пулăшу парĕ.

Пирĕн республикăри чылай районсенчи çутĕç пайĕсем учительсен кадрĕсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарас, вĕсен пĕлĕвне ÿстерсе пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Учительсене заочно йĕркепе вĕрентессине тивĕçлипе йĕркелемен. Уйрăм учительсем вара, педагогика ĕçне вĕреннĕ пулин те, хăйсен пĕлĕвне совет наукин çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе пуянлатса пымаççĕ. Çавна пула иртнĕ вĕренÿ çулĕнче хăшпĕр шкулсенче вĕренÿ пахалăхĕ тивĕçлĕ вырăнта пулмарĕ, вĕренекенсенчен чылайĕшĕ аслăрах класа куçаймасăр юлчĕç.

Кăçал пирĕн республикăри шкулсенче педучилищĕсенчен, педагогика тата учительсен институчĕсенчен вĕренсе тухнă 445 çамрăк учитель хутшăнчĕ. Çак çамрăк учительсене шкул директорĕсен тата пысăк опытлă учительсен куллен пулăшса пымалла.

Вĕренÿ пахалăхне лайăхлатас тата вĕренекенсен дисциплинине çирĕплетес ĕçре шкулсенчи комсомол тата пионер организацийĕсем те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен ĕçĕсене те вĕренме тытăннă малтанхи кунсенчех чĕртсе ямалла.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче хăшпĕр çĕрте шкулсенчи комсомолпа пионер организацийĕсем начар ĕçлерĕç. учительсемпе ВЛКСМ райкомĕсем те вĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн тăрăшмарĕç. Çавна пула ачасем шкулта вĕренекенсен правилисене пурнăçласа пыман тĕслĕхсем те пулнă. Акă. Етĕрне районĕнче шкул правилисене пăснăшăн пĕлтĕр 23 ачана шкултан кăларса янă...

Çĕршывра мирлĕ пурнăç тапхăрĕ пуçланни пирĕн шкулсенчи вĕренÿ пахалăхне лайăхлатма çав тери пысăк майсем туса парĕ. Иккĕленмелли те çук. шкул работникĕсемпе çутĕç работникĕсем партипе совет. комсомолпа профсоюз организацийĕсем вăя хурса ĕçлесен. пирĕн шкулсем кăçалхи вĕренÿ çулĕнче çитĕнекен çамрăк ăрăва воспитани парас тĕлĕшпе татах та пысăк çитĕнÿсем тăвĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 31-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 31-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелтухăçĕнче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсене японецсен 23.000 салтакĕпе офицерĕ тата 20 генералĕ тытăнма парăннă.

СОВИНФОРМБЮРО.

И. В. Сталин Чехословакири автомобиль промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн делегацине йышăнни

Августăн 30-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Генералиссимус Чехословакири автомобиль промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн делегацине йышăннă. Делегацире çаксем пулнă: П. Проусек, Я. Добр, А. Краус, Е. Выгнанский, Е. Щепанек, Я. Улрих, Я. Данда, Я. Верпировский, Я. Голечек тата М. Стрейчек пулнă.

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Чехословакин Совет Союзĕнчи ĕçри повереннăйĕ Я. Гниздо тата ВЦСПС Председателĕ В. В. Кузнецов пулнă.

Делегаци В. И. Сталин Генералиссимуса Чехословаки рабочийĕсен парнине—Прагăри заводсенче тунă автомашинăна тата Прагăри автомобиль завочĕсенче мĕнле ĕçленине кăтартакан фотоÿкерчĕксен альбомне панă.

Сталин юлташ Чехословакири рабочисене хăйĕн ячĕпе тав тума ыйтнă.

Чехословакири автомобиль промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн делегацийĕ калани

Августăн 30-мĕшĕнче Чехословаки рабочийĕсен делегацине И. В. Сталин Генералиссимус йышăнна вăхăтра çав делегаци пуçлăхĕ П. Проусек делегаци ячĕпе çапла каланă:

«Аслă Генералиссимус Сталин!

Çак чаплă кун Сире тăванла вырăс халăхĕн çĕршывĕнче, Мускавра саламлатпăр. Сире Татр заводĕнчи служащисен ячĕпе, Чехословаки республикинчи рабочи класс ячĕпе, пĕтĕм Чехословаки халăхĕ ячĕпе саламлатпăр.

Эпир Сире хăвăра тата Сирĕн ĕçĕре çав тери хисеплетпĕр. Эсир ертсе пынипе çапăçакан çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çар пулман пулсан, пирĕн халăха тата пĕтĕм Европăна мĕн тери пысăк инкек тÿсмелле пулнине эпир лайăх ăнланатпăр. Хĕрлĕ Çар, пирĕн славян тăвансем, пирĕн хаклă Тăван çĕршыва нацистла захватчиксенчен тасатрĕ, пире ирĕке тухма, пирĕн çĕршывра канлĕхпе мир туса хума татăклăн пулăшрĕ тата рабочи класа çĕнĕрен савăнăçлăн ĕçлеме май пачĕ.

Эпир çĕнĕрен ĕçлеме пуçланине эпир хамăр тунă япаласем кăтартаççĕ. Пирĕн заводсенчи служащисем Сире, Генералиссимус Сталин, çав япаласенчен пĕрне — ирĕке тухнă çĕршывăн территорийĕнче чи малтан тунă пĕр автомашинăна пама шут тытрĕç. Çапла туса вĕсем хамăрăн заводри служащисемпе пĕтĕм Чехословаки халăхĕ Сире тата Сирĕн халăхăра çав тери юратнине кăтартасшăн.

Çак машинăна хăюллăн шухăшласа туни вăл Чехословаки халăхĕн ĕçĕ пулчĕ. Çак машинăна ют çĕршывсенчи чи лайăх машинăсемпе те танлаштарса пăхма пулать, хурламалла пулас çук, вăл пирĕн ĕçе тивĕçлĕн кăтартса тăрĕ.

Эсир пире йышăннипе усă курса, эпĕ Сире служащисем саламласа çырнă альбом—пирĕн заводсем ĕçленине кăтартакан ÿкерчĕксен альбомне паратăп, вăл çĕнĕ пурнăçăн савăнăçлă пуçламăшне кăтартса тăтăр». (ТАСС).

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

БИБЛИОТЕКАСЕНЕ ОБЯЗАТЕЛЬНĂЙ ЙĔРКЕПЕ РЕГИСТРАЦИЛЕССИ ÇИНЧЕН

РСФСР Совнаркомĕн 1945 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнчи распоряженийĕпе килĕштерсе, ЧАССР Совнаркомĕ кăçалхи августăн 20-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 1-мĕшне çитиччен пур ведомствăсемпе организацисен библиотекисене те обязательнăй йĕркепе регистраци тума йышăннă.

ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Культурăпа Çутĕç учреждени ĕçĕсен Управленийĕпе СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш республикинчи статистика Управленийĕн Уполномоченнăйĕне районри тата хулари культурăпа çутĕç енĕпе ĕçлекен пайĕсен заведующийĕсене пухса, инструктивлă канашлу туса ирттерме хушнă. Çав канашлăва библиотекăсене регистрацилемелли йĕрке çинчен РСФСР статистика Управленийĕпе РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Культурăпа Çутĕç учреждени ĕçĕсен Комитечĕ йышăннă инструкци тăрăх ирттермелле.

Мĕнпур учрежденисен, шкулсен, предприятисемпе обществăлла организацисен руководителĕсене хăйсен аллинчи библиотекăсене районсенчи тата хуласенчи культурăпа çутĕç ĕçĕсен пайĕсенче регистрацилемелле.

ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Культурăпа Çутĕç учреждени ĕçĕсен Управленийĕн начальникне библиотекăсене регистрацилес ĕçрен пăрăнма тăрăшакан библиотека заведующийĕсене ответ тыттарма хушнă.

РЕСПУБЛИКĂРИ ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТЙĔР ХУÇАЛĂХ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН 1945 ÇУЛХИ ИЮЛЬ УЙĂХĔНЧИ ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри пурăнмалли çуртйĕр хуçалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

Шупашкарти коммунальнăй мунча (директорĕ Костина юлташ). Ăна 3000 тенкĕ премине пама йышăннă.

Шупашкарти коммунальнăй парикмахерски (заведующийĕ Екатеринина). Ăна 2000 тенкĕ памалла тунă.

Суту-илÿ организацийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи II-мĕш кварталти итогĕсем

ВЦСПС, СССР Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ тата СССР-па РСФСР Центросоюзĕ, суту-илÿпе пĕрлешÿллĕ апатлану организацийĕсемпе предприятийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи II-мĕш кварталти итогĕсене пăхса тухса, çаксене премисем пама йышăннă:

Советски районри Мăн Ямаш ялповне (ялпо председателĕ П. Михайлов, местком председателĕ К. Дмитриева) — пĕрремĕш преми; Вăрмар районĕнчи Шăмалăх ялповне (ялпо председателĕ И. Андреев, местком председателĕ К. Сорокина)—иккĕмĕш преми; Канаш районĕнчи Вăтапуç ялповне (ялпо председателĕ А. Алексеев. местком председателĕ В. Листов)—виççĕмĕш преми; Шупашкар районĕнчи Кÿкеç ялповĕн Шĕнерпуç лавкине (заведующийĕ Рискова)—пĕрремĕш преми; Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Турхан ялповĕн магазинне (заведующийĕ Голицина) тата Вăтапуç ялповĕн Каракăл лавкине (заведующийĕ Егоров)—иккĕмĕш преми; Ишлей районĕнчи Ишлей ялповĕн Мамка лавкине (заведующийĕ Ямутина) тата Шăхасан районĕнчи Ямаш ялповĕн Шăкăр лавкине (заведующийĕ Александрова)—виççĕмĕш преми пама йышăннă.

Чăвашпотребсоюзăн Канашри межрайбазине (база директорĕ Кулешов. профоргĕ Максимова)—виççĕмĕш преми памалла тунă.

Унсăр пуçне. Центросоюз Президиумĕ Муркаш ялповĕн председательне Григорьева. Вăрмар районĕнчи Кавал ялповĕн председательне Кудряшова тата Улатăрти ĕçмелли япаласем тăвакан предприятин директорне Моховăна тав тунă.

Орденсемпе медальсем пани

ВĂРНАР. Çак кунсенче ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ СССР Верховный Совет Президиумĕ ячĕпе Вăрнар. Калинино. Çĕмĕрле районĕсенчи ĕçсыннисен пысăк ушкăнне орденсемпе медальсем панă.

Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз председателĕ А. Васянин тата ВКП(б) Вăрнар райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Я. Петров юлташсем Ленин орденĕ илнĕ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне Калинино районĕнчи «Çуталла» колхоз председателĕ А. Емельянов. Вăрнар МТС директорĕ Ф. Никонов. Вăрнар райсовет исполкомĕн председателĕ П. Осипов. ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ В. Чернов тата ВКП(б) Вăрнар райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçленĕ С. Коротков юлташсем илнĕ.

«Хисеп палли» ордена 2 сын, «Ĕçри хастарлăхшăн» медале 6 сын, «Ĕçре палăрнăшăн» медале 7 сын илнĕ.

Правительствăн пысăк наградине илнĕ хыççăн ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ Я. Петров. Вăрнар МТС директорĕ Ф. Никонов. ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ В. Чернов тата ыттисем те хĕрÿллĕ сăмахсем тухса каланă.

Юлашкинчен ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. Андреева юлташ наградăна илекенсене пысăк наградăна илнĕ ятпа тав туса, ĕçре малашне çĕнĕ çитĕнÿсем тума сывлăх сунна.

Генералиссимус Чан Кай-ши СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне М. И. Калинина янă телеграмма

Совет Союзĕпе Китай хушшинчи туслăхпа союз çинчен тунă Договора Китайпа Совет Союзĕн Правительствисем çирĕплетнĕ май эпĕ Сире пĕтĕм Китай ячĕпе хĕрÿллĕн саламлатăп.

Пирĕн икĕ çĕршыв тунă Договор пирĕн çĕршывсем хушшинчи яланхи туслăхăн никĕсне çирĕплетессине тата Китайпа Совет Союзĕн аслă халăхĕсем пĕр-пĕрне килĕштерсе ĕçлесе пĕрне-пĕри пулăшса тăни Инçетри Хĕвелтухăçĕнче мирлĕ пурнăçпа пурăнма май туса панине эпĕ шанса тăратăп, çапла вара пĕтĕм тĕнчипех мир туса хурас ĕçре историллĕ çĕнĕ страница уçăлать, çакă вăл пирĕн икĕ çĕршыва кăна мар, тĕнчери ирĕклĕхе юратакан пур çĕршывсене те кирлĕ.

ЦЗЯН ЧЖУН-ЧЖЭН.

Китай Республикин Наци Правительствин Президентне Цзян Чжун-чжэн господина

Туслăхпа союз çинчен калакан Договора тата Килĕшÿсене, августăн 14-мĕшĕнче Мускавра алă пуснăскерсене, Китай республикин Правительствипе СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ çирĕплетнĕ май мана янă саламшăн эпĕ Сире сума суса тав тăватăп.

Туслăхпа союз çинчен калакан Договор тата Килĕшÿсем Совет Союзĕпе Китай Республики хушшинчи яланхи туслăха малалла çирĕплетес ĕçре чи вăйлă никĕс пулса тăнине эпĕ те шанса тăратăп. Çав туслăхпа эпир пĕр-пĕрне пулăшса тăрса тата ăна пирĕн çĕршывсемшĕн те, пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çĕршывсемшĕн те усăллă туса çирĕплетсе пырăпăр.

М. КАЛИНИН.

Генералиссимус Чан Кай-ши СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталин Генералиссимуса янă телеграмма

Пĕтĕм тĕнчипе тĕрĕслĕх никĕсĕ çинче çĕнĕрен мирлĕ пурнăç йĕркеленсе пынă вăхăтра Совет Союзĕпе Китай хушшинчи туслăхпа союз çинчен калакан Договора алă пусни — историри питĕ пысăк ĕç пулса тăрать.

Халĕ çав Договор, икĕ çĕршывăн Правительствисем те çирĕплетнĕ хыççăн, законлă пулса тăчĕ. Çавна май эпĕ Сире пĕтĕм чĕререн хĕрÿллĕн саламлатăп.

Ĕнтĕ паянтан пуçласа пирĕн икĕ çĕршывăн Правительствисем, туслăхпа союз çинчен тунă Договорпа усă курса, пĕр-пĕрне шанса тăрассин тата пĕрне-пĕри пулăшса тăрассин тĕп шухăш-кăмăлне палăртма пултарĕç тесе эпĕ хытă шанса тăратăп: çакă пире Китайпа Совет Союзĕн аслă халăхĕсене тата пĕтĕм тĕнчери халăхсене телейлĕ те лайăх пурнăç туса памашкăн пĕтĕм вăйпа ĕçлеме кирлĕ.

ЦЗЯН ЧЖУН-ЧЖЭН.

Китай Республикин Наци Правительствин Президентне Цзян Чжун-чжэн Генералиссимуса

Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăхпа союз çинче калакан Договора тата Килĕшÿсене, августăн 14-мĕшĕнче алă пуснăскерсене, çирĕплетнĕ май янă саламшăн эпĕ Сире тав тăватăп.

Çав Договорпа Килĕшÿсем Совет Союзĕпе Китай хушшинчи туслă çыхăнусене малалла вăйлатас ĕçре çирĕп никĕс пулассине эпĕ шанса тăратăп; çав Договорпа Килĕшÿсем пирĕн халăхсене лайăхран лайăх пурăнма пулăшĕç, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăха çирĕплетме пулăшĕç.

Çав историллĕ документсене çирĕплетнĕ май эпĕ Сире, Президент господин, салам яратăп.

И. СТАЛИН.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне В. М. Молотов господина

Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăхпа союз çинчен калакан Договора икĕ çĕршывăн Правительствисем те çирĕплетнĕ май эпĕ Сире пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп.

Çакăнпа пĕрлех эпĕ Сире Эсир Мускаври калаçусем вăхăтĕнче пирĕнпе ырă кăмăлпа тата туслăн килĕштерсе ĕçленĕшĕн тав тăватăп.

Çав Договора çирĕплетнĕ хыççăн Китайпа Совет Союзĕн Правительствисем пĕр-пĕрне пулăшса пырасси тата пĕр-пĕрне килĕштерсе ĕçлесси кунсеренех çирĕпленсе пырĕ, çакă вăл Инçетри Хĕвелтухăçĕнче, çавăн пекех тата пĕтĕм тĕнчере мирлĕ та лайăх пурăнма май парĕ.

ВАН ШИ-ЦЗЕ.

Китай Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне Ван Ши-Цзе господина

Эсир янă саламшăн тата Мускаври калаçусем вăхăтĕнче Эсир ырă кăмăлпа туслăн килĕштерсе ĕçленĕшĕн Сире чĕререн тав тăватăп тата хам енчен туслăхпа союз çинчен калакан Договора тата вĕсемпе пĕрлех Совет Союзĕпе Китай Республики тунă Килĕшÿсене çирĕплетнĕ май Сире салам яратăп.

Совет Союзĕпе Китай тунă Договорсемпе Килĕшÿсем, пĕр-пĕрне туслăн килĕштерсе ĕçлесе тата пĕрне-пĕри пулăшса пырас шухăш-кăмăлпа тунăскерсем, Японипе енчен пулас агрессие сирсе яма шанчăклă вăй пулса тăнине эпĕ хытă шанса тăратăп, çав документсем мирлĕ пурнăçпа хăрушсăрлăха тытса тăма пирĕн çĕршывсене те, тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене те пысăк пулăшу парĕç.

В. МОЛОТОВ.

ВЦСПС-ра

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ИНВАЛИДĔСЕНЕ ĔÇЕ ВЫРНАÇТАРАССИ ÇИНЧЕН

ВЦСПС секретариачĕ Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене вырăнти промышленность предприятийĕсене ĕçе вырнаçтарма йышăннă.

Профсоюз организацийĕсем чылайĕшĕ çак ыйту çине тимлĕн çаврăнса пăхаççĕ. Сывалакан воинсене тĕрлĕ профессисене вĕрентес ĕç анлăн сарăлнă. Çав профессисене вĕрентмелли мастерскойсене чирлисене сыватакан учрежденисемпе госпитальсем çумĕнчех тăваççĕ. Облаçсемпе районсенчи хăшпĕр комитетсем социальнăй обеспечени пайĕсемпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. ĕçлеме пултаракан инвалидсене шута илеççĕ, вĕсем валли ĕç тупса параççĕ, вĕсене çĕнĕ профессие вĕренме пулăшаççĕ. Подшипниксем тăвакан пĕрремĕш заводра инвалидсене кашнине уйрăм шута илнĕ. вĕсемшĕн уйрăмах хытă тăрăшаççĕ: вĕсене вĕренме пулăшаççĕ, вĕсен пурнăç, хваттер условийĕсене лайăхлатаççĕ, кану çурчĕсемпе санаторисене кайма путевкăсем параççĕ.

ВЦСПС секретариачĕ вырăнти промышленноçра ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн Центральнăй Комитетне çитес икĕ уйăх хушшинче хуçалăх органĕсемпе пĕрле Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен ĕç условийĕсене тĕрĕслесе тухма хушнă. Вырăнти промышленность предприятийĕсенче ĕçлекен инвалидсен квалификацине хăпартма, вĕсене ертсе пыракан вырăнсене—районсенчи промышленность комбиначĕсен директорĕсем, килте куллен кирлĕ япаласем тăвакан комбинатсен директорĕсем туса хума, цех начальникĕсем, мастерсем, техникăллă руководительсем туса хума тăрăшмалла.

Фабрикăпа заводсен комитечĕсен вырăнти промышленность предприятийĕсем Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене производствăна вĕрентмелли плана мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăмалла, çавăн пекех тата предприятисемпе мастерскойсенче ĕçлеме пултаракан инвалидсене килте ĕçлеме ĕç парас тĕлĕшпе хуçалăх органĕсене пулăшмалла. (ТАСС).

Кĕленче завочĕсем ĕçлеме пуçлаççĕ

Стройматериал промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕн кĕленче завочĕсем III-мĕш кварталта государствăна 5 миллион çурă тăваткăл метр чÿрече кĕленчи туса памалла III-мĕш кварталта чÿрече кĕленчине II-мĕш кварталта туниччен нумай ытларах туса кăлараççĕ.

Кĕленче ытларах туса кăларма нимĕç оккупанчĕсем ишсе хăварнă заводсене хута ямалла.

Гомельте, Константиновкăра тата Лисичанскра 4 кĕленче завочĕн темиçе пайне юсаса хута янă ĕнтĕ. Сентябрĕн 15-мĕшĕнче Брянск облаçĕнчи Бытошьри пысăк кĕленче завочĕ ĕçлеме пуçлать. Октябрь уйăхĕнче Брянск облаçĕнчи Чернятинскри завод та кĕленче тума пуçлать.

Константиновкăри Октябрьти революци ячĕпе тăракан завод, кĕленчене пĕр кăмакара шăратсах, талăкра 12 пин тăваткăл метр ытла кĕленче туса кăларать. Сентябрь уйăхĕ варринче çав заводра тепĕр кăмака лартаççĕ. Çав кăмака вăрăм кĕленчене икĕ хут ытла туса кăларма май парать. (ТАСС).

ССР Союзĕн халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратмалли тата атала тапмалли пилĕкçуллăх план

Большевиксен Партийĕн Центральный Комитечĕ тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пирĕн государствăшăн çав тери паха решени йышăнчĕç.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата СССР Совнаркомĕ СССР госпланне наркоматсемпе тата союзла республикăсемпе пĕрле 1946—1950 çулсенче Совет Союзĕн халăх хуçалăхĕпе чугун çул транспортне юсаса ура çине тăратмалли тата аталантармалли пилĕкçуллăх план тума хушнă. «Правда» хаçатра августăн 19-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă çак пĕлтерĕве Тăван çĕршывшăн çунакан пур совет патриочĕсем те тивĕçлипе хавхаланса кĕтсе илчĕç. Республикăсемпе облаçсенче тăваттăмĕш пилĕкçуллăх планне тăвас тĕлĕшпе практикăлла ĕç пуçланать. Аслă Сталин ертсе пыракан пирĕн Тăван çĕршыв, вăрçăн йывăр тĕрĕслевĕсенчен çĕнтерӳпе тухнăскер, социализм строительствин питĕ пысăк çĕнĕ программине пурнăçа кĕртме хатĕрленет. Пирĕн хăватлă социализмлă государство мирлĕ аталану тапхăрне—производствăлла вăйсене тата культурăна хăвăрт юсаса ура çине тăратмалли тата çĕнĕрен чечеклентермелли тапхăра пырса кĕрет.

Отечественнăй аслă вăрçă пирĕн производствăлла вăйсене кăна мар, çавăн пекех тата советлă экономика системине те пур енчен те тĕрĕслесе тухрĕ. Большевиксен партийĕн ертсе пыракан тата хавхалантаракан вăй-хăвачĕ, унăн аслă политики, партипе халăхăн çулпуçĕ Сталин юлташ малашнехине генилле курса тăни пирĕн çĕршыва пĕтесрен çăлса хăварчĕç. Пирĕн ССР Союзне кая юлнă çĕршывран малта пыракан çĕршыв, аграрлă çĕршывран индустрилле çĕршыв, техника тĕлĕшĕнчен хăватсăр çĕршывран индустрилле-колхозлă вăйлă та хăватлă çĕршыв туса хунă сталинла пилĕкçуллăхсем пирĕн социализмлă государствăна экономика тĕлĕшĕнчен никама пăхăнман çĕршыв тата тăшманн тапăннине хирĕç тăма пултаракан çĕршыв туса хума май пачĕç.

16 çул каярах большевиксен партийĕ социализм тумалли пĕррремĕш пилĕкçуллăхăн çав тери паллă планне йышăнчĕ. «Пилĕкçуллăхăн тĕп задачи вăл,—тесе кăтартса пачĕ Сталин юлташ,— хамăр çĕршывра промышленноçа пĕтĕмĕшпе кăна мар, тата транспорта та, ялхуçалăхне те социализм никĕсĕ çинче çĕнĕлле хĕçпăшаллантарма тата реорганизацилеме пултаракан индустри тăвассинче пулнă». Малалла Сталин юлташ çапла кăтартса панă: «пилĕкçуллăхăн задачи вăл—çĕршыв оборонине питех те вăйлăн ӳстерсе яма çĕршывра мĕнпур кирлĕ техникăллă тата экономикăллă условисене туса ситĕнтерессинче, çĕршыва ют çĕртен вăрçăллă интервенципе килме хăтланакансене, ют çĕртен вăрçăпа килсе тапăнма хăтланакансене пурне те татăклăн отпор пама пултараканн туса ситĕнтерессинче пулнă».

Сталинла пĕррремĕш пилĕкçуллăха, совет халăхĕн паттăрла ĕçне пула, тăватă çул та виçĕ уйăх хушшинче тултарнă. «Çакă вăл ССР Союзĕнчи рабочи класпа хресченсен çав тери пысăк, пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнтерĕвĕ пулнă» («ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ»).

Иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн задачисем, пĕррремĕш пилĕкçуллăхăн задачисемпе танлаштарсан, татах та пысăкрах пулнă. Ăна та вăхăтĕнчех тултарнă. Иккĕмĕш пилĕкçуллăх пĕтнĕ тĕле СССР промышленноçĕ, 1913 çултипе танлаштарсан, çичĕ хут ытла ӳснĕ. Промышленноçпа ялхуçалăха çĕнĕ техникăллă никĕс çине тăратса тĕпренех улăштарса ситернĕ. Пирĕн çĕршыв рабочисемпе хресченсен материальнăй тата культура тĕлĕшĕнчи ӳсĕмне малалла аталантармалли анлă программăна пурнăçа кĕртнĕ.

Виççĕмĕш пилĕкçуллăх пуçланнă тĕле пирĕн çĕршыв, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче çĕнĕ техникăпа усă курас енчен илсен, чи малта пыракан çĕршыв пулнă. Производство техники тĕлĕшĕпе тата хамăрăн промышленноçть ӳсĕмĕн хăвăртлăхĕ тĕлĕшĕпе эпир капитализмлă тĕп çĕршывсене хăваласа ситсе иртсе кайнă. Вăрçă Совет Союзĕнчи халăхсем виççĕмĕш пилĕкçуллăх планне тултарас тесе çав тери хавхаланса ĕçленĕ вăхăтра пуçланса кайрĕ. Пирĕн çине вăрă-хурахла килсе тапăннă гитлерла Германи сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче никам çĕнтереймн крепость пулса тăнă социализмлă хăватна çĕмĕрсе тĕп пулчĕ. ССР Союзне хирĕç вăрçнă вăхăтра Германи оккупациленĕ Европăри вунă çĕршывран пытса илнĕ мĕнпур ресурссемпе усă курнă пулин те, Совет Союзĕ тăшмана вăрçăра та, экономика тĕлĕшĕнчен те çĕнтерчĕ. Социализм çĕршывĕ вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче те, хăйĕн оборона индустрийĕн продукцине темиçе хут ӳстерсе, Германи империализмне тĕппипех парăнтарма пултарчĕ.

Халĕ ĕнтĕ вăрçă иртсе кайрĕ. Гитлерла Германие аркатса тăкнă хыççăн, унăн союзникне—Японие агрессорне те аркатса тăкнă. Çĕршыв мирлĕ строительство тапхăрне таврăнать. Эпир пысăк электростанцисене, заводсене, шахтăсене юсаса ура çине тăратма тата çĕнĕрен тума тытăнтăмăр. Халĕ ĕнтĕ пĕр çулхи планран чылай иртсе каякан строительство задачисене татса памалла. Нимĕçсем аркатса хăварнă промышленность тата ялхуçалăх районĕсене юсаса ура çине тăратма та, çавăн пекех тата халăх хуçалăхне малалла аталантарма та темиçе çуллăха палăртса хунă план кирлĕ. Çакăнтан ĕнтĕ СССР халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратмалли тата аталантармалли çĕнĕ пилĕкçуллăх план тума кирли тухса тăрать. Сталин юлташ эпир Германие çĕнтернине уявланă кунсенчех халăха вăрçă кӳрсе хăварнă суранcене хăвăртрах тӳрлетме, совет государствин вăй-хăватне татах та ытларах çĕклеме чĕнсе каларĕ. Сталин юлташ кăларса тăратнă çак историллĕ задача çĕнĕ пилĕкçуллăх планне тумалли тĕп директива пулса тăрать. ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕн пĕлтерĕвĕнче çапла кăтартса панă: «Пилĕкçуллăх планра ССР Союзĕн вăрçă вăхăтĕнче нимĕçсем оккупациленĕ районсен халăх хуçалăхне пĕтĕмĕшпех юсаса ура çине тăратассине, халăх хуçалăхне вăрçă хыççăн урăхлатса çĕнетессине тата ССР Союзĕн мĕнпур районĕсене малалла аталантарассине палăртса хумалла. Çав плана пурнăçа кĕртсен, СССР халăх хуçалăхĕ вăрçăччен хинчен чылай вăйлăрах пулмалла».

Вăрçă умĕн совет экономики питĕ çӳллĕ вырăна ӳссе ситрĕ. 1940 çулта СССР промышленноçĕн продукцийĕ, виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн виçĕ çулĕ хушшинче 44 процент ӳссе, 137,5 миллиард тенке ситнĕ. Тĕштырă культурисен продукцийĕ 7,3 миллиард пăта яхăн пулнă. Пирĕн çĕршыв ĕçлекен предприятисен шутне домна хыççăн домна, шахта хыççăн шахта, завод хыççăнн завод кĕртсе пынă. Производство средствисене тумалли производство та, куллен кирлĕ таварсем тăвакан производство та вĕçĕмренех ӳссе пынă. Çĕнĕ пилĕкçуллăх планĕнче ĕнтĕ хуçалăха аталантарса вăрçăччен хи пусăма ситерме çеç мар, унтанн чылай мала иртсе кайма палăртмалла.

Вăрçă вăхăтĕнчех вăрçă хыççăнхи мирлĕ строительствăн никĕсне хывма тытăннă. Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн çĕршыв çĕнĕрен çĕршер завод, фабрика, шахта, электростанци, чугун çул тунă. 1944—1945 çулсенче çĕнĕ предприятисем тăвас ĕç калăпăшĕ вăрçăччен хипе танлашма пуçланă. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсаса ура çине тăратмалли чи хăвăрт тумалли мерăсем çинчен» йышăннă историллĕ постановлени хыççăн, нимĕç захватчикĕсем аркатса хăварнă хуçалăха юсаса ура çине тăратма тытăннă. Çак çĕнĕ пилĕкçуллăх хушшинче аркатса юхăннă хуçалăха пĕтĕмпех юсаса ура çине тăратмалла, эпир ăна юсаса ура çине тăратăпăр та!

Совет строй 1941 çулта çулла тата суркунне пирĕн мирлĕ экономикăна вăрçă ыйтнă пек хăвăрт улăштарса лартма май пачĕ. Пирĕн совет хуçалăхĕн системи ытти системăсенченн лайăхрах пулни хамăрăн вăрçă ыйтнă пек ĕçлекен экономикăна кĕске вăхăтрах мирлĕ вăхăтри пек ĕçлесси çине йĕркеллĕ тата план тăрăх куçарма май парать. Пирĕн социализмлă экономикăна ытти çĕршывсенчи пек йывăрлăхсем хăратса тăмаççĕ. Капитализм çĕршывĕсенче вăрçă пĕтнĕ хыççăнах массăллă ĕçсĕрлĕх пуçланса каять. Социализмлă системăна кризиссемпе ĕçсĕрлĕх хăратса тăмасть. Совет халăхĕ план тăрăх аталанса пырать, малалла та вăл çавăн пекех аталанса пырĕ. Вăрçă пĕтнĕ хыççăн ССР Союзĕн хăйĕн хуçалăхне тăтăшах аталантарса ситĕнтермелли майсем татах та ытларах пулаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн çĕршыв техника тата организацилĕх тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк опыт пухрĕ, çав опытпа эпир вăрçă хыççăнхи экономикăна хăвăртрах аталантарас ĕçре ăнăçлăн усă курма пултаратпăр. Вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе вĕçленнипе пула, оборона промышленноçĕн чылай пысăк пайĕ мирлĕ вăхăтра кирлĕ продукци туса кăларма тытăнма пултарать. Çапла, сăмахран, пирĕн малта пыракан артиллери заводĕсем хăйсен пуçарăвĕпех нефть промышленноçĕ валли оборудовани туса кăларма тытăннă.

Çĕнĕ пилĕкçуллăх планĕнче вăрçă вăхăтĕнче Казахстанра, Узбекистанра, Кавказ леш енчи республикăсенче туса лартнă индустри чылай ӳсмеллине палăртмалла. Кăнтăрти тата хĕвеланăçĕнчи районсенчи хуçалăха юсаса ура çине тăратма вăрçă вăхăтĕнче вăйлăланса кайнă Уралти, Çĕпĕрти тата ССР Союзĕн Вăтаçĕр пайĕнчи облаçĕсем пулăшĕç. Тăваттăмĕш пилĕкçуллăх планĕнче советлă çамрăк республикăсен—Латвин, Литван, Эстонин, Молдавин хуçалăхĕсене çĕнĕрен туса аталантарасси паллă вырăн йышăнса тăмалла. Çĕнĕ пилĕкçуллăх вăхăтĕнче республикăсенче вырăнти промышленность та вăйлăн аталанса кайĕ.

Сталинла пилĕкçуллăхсем хуçалăх строительствин программи çеç мар, вĕсем ялан ССР Союзĕнчи халăхсен материальнăй тата культура тĕлĕшĕнчи пурнăçĕн условийĕсене те вĕçĕмрех лайăхлатса пымалли программа та пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче те пирĕн партипе правительство ĕççыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн ывăна пĕлмесĕр тăрăшрĕç. Çĕнĕ пилĕкçуллăх халăхăн материальнăй ырлăхĕпе культурине татах та ытларах ӳстерĕ. Пирĕн умра пурăнмалли суртсем строительстви тĕлĕшĕпе, уйрăмах нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенче, çавăн пекех тата вăрçă вăхăтĕнче вăйлăн аталаннă хĕвелтухăçĕнчи индустри центрĕсенче пурăнмалли суртсем тăвас тĕлĕшпе питĕ пысăк задачăсем тăраççĕ.

Ĕлĕк вăрçă юхăнтарса хăварнă хуçалăха юсаса ура çине тăратма государствăсене вуншар çул кирлĕ пулнă. Фашистла тискер кайăксем совет çĕршывне аркатса хăварнине нимĕнпе те танлаштарма çук. Нимĕç оккупацийĕ айне лекнĕ пысăк территорире фашистсем темиçе ĕçре тăрăшса ĕçленипе тунă пурлăха аркатса ишĕлтерсе хăварнă. Ĕлĕкхи Российăна çакăн пек аркатнă пулсан, вăл каялла вăтам ĕмĕрсем патнелле куçса ларнă пулĕччĕ. Пирĕн хăватлă социализмлă державă хăй умне питĕ пысăк задача—ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха пĕтĕмĕшпех юсаса ура çине тăратас тата вăрçă кӳнĕ суранcене пилĕк çул хушшинче тӳрлетсе ситерессине кăна мар, тата ССР Союзĕн халăх хуçалăхне аталантарса вăрçăччен хинченн чылай мала иртерсе ярас задачăна лартать!

Çавăнпа çĕнĕ пилĕкçуллăх планне тума хатĕрленни çинчен пĕлтерни кашни совет çыннине хавхалантарать, ăна çĕнĕ вăй парать, хамăрăн Тăванн çĕршыв çав тери вăйланса каяссине шантарса тăрать.

Çĕнĕ пилĕкçуллăх планĕ пирĕн халăхăн шухăш-кăмăлĕпе ĕмĕтне, социализмлă Тăван çĕршыва çĕнĕрен чечеклентерес тесе, вăл ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме хатĕррине кăтартса парĕ. Çĕнĕ пилĕкçуллăх планĕ аслă Сталинăн—пирĕн çĕршыва генилле улăштараканĕн шухăшне каласа парĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе Совет Союзĕнчи халăхсем вăрçăра пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнтерӳ турĕç, мирлĕ строительствăра та вĕсем çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвĕç.

(«Правда» хаçатăн августăн 30-мĕшĕнчи умстатьи).

РЕСПУБЛИКА УЙ-ХИРĔСЕНЧЕ

72 колхоз ыраш акса пĕтернĕ

ÇĔРПӲ, августăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă парас тата ыраш акас ĕç районра халĕ хĕрсех пырать. Пулай колхозсем тĕштырра вырса пĕтерчĕç. «Луч» колхоз пур тĕрлĕ тырăсене те вырса пĕтернĕ. Районри колхозсем паянхи кун тĕлне 73 процент ытларах вырса пухнă. 4070 гектар çинчи тырра капана хывнă, 4000 гектара яхăн авăн çапнă. Пулай колхозсем авăн çапас тата капан хывас графика пурнăçласа пыраççĕ. Пур колхозсенче те кăçал уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ. «Ĕмĕт», «Заря», «Первое мая», «Малалла», «Луч» колхозсем тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçре те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кунта уйрăм сдельщинăпа ĕçлени тата тырпул пухса кĕртес ĕçе ялти ĕçлеме пултаракан пур çынна та ĕçе явăçтарни калама çук паха вырăн йышăнать. «Луч» колхозра ватти-вĕтти кăна мар. Колхоз правленийĕнче ĕçлекенсем те тырă вырма тата авăн çапма тухнă, вĕсем кăнтăрла та çĕрле те ĕçленĕ. Колхоз председателĕ Николаев юлташ хăй те тырă вырса пĕтеричченех жнейкăпа машинист пулса ĕçленĕ. Вăл кулленхи нормăна 130—150 процент тултарнă. Кунта ĕçе тухман, е кулленхи нормăна тултарман колхозник пулман. Çак колхоз сентябрĕн 5-мĕшĕччен государствăна тырă парса татма палăртнă. «Луч» колхоз ыраш акса пĕтернĕ, пĕтĕм лаптăка машинăпа акнă.

Пирĕн колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе малтанхи пилĕккунлăхсенче графика тултарса пыраймарĕç. Халĕ пур колхозсем те графика пурнăçласа пыраççĕ. Паянхи кун тĕлне районри 72 колхоз ыраш акса пĕтернĕ, юлашки 7 колхоз та паян-ыран акса пĕтерет. Акнă лаптăкран 60 процентне ытла машинăпа акнă.

Пирĕн колхозсенче кăçал майракаллă шултăра выльăхсемпе те усă кураççĕ. Кĕлте турттарас, государствăна тырă парас ĕçре тата колхозăн шалти ĕçĕсенче пурĕ 200 вăкăр ытла ĕçлет.

Г. ЧУМЕЙКИН,
Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Хăйсен участокне вырса пĕтеричченех хиртен кĕмен

Шăмăршă районĕнчи «Заря» колхоз (председателĕ Тимофеев юлташ) районра чи малтан, августăн 13-мĕшĕнче, 4 ĕç кунĕнче ыраш вырса пĕтерчĕ. Ыраш вырма тухсан 3-мĕш кунĕнчех авăн çапма тата государствăна тырă пама тытăннă. Августăн 11-мĕшĕнче малтанхи хут Хĕрлĕ обоза государствăна 300 пăт тырă ăсатнă. Çакăн хыççăн государствăна тырă памалли графика колхоз яланах ытлашшипех пурнăçласа пырать.

Колхоз районра чи малтан тĕштырăсене те вырса пуçтарчĕ. Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем кăнтăрла та çĕрле те ĕçлерĕç. Кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пычĕç. Ватти-вĕтти пурте ĕçе хутшăннă. Акă Матрена Петровна Мресова юлташах илер, вăл 60 çулта. Хăй ваттине пăхмасăрах вăл кулленхи нормăна çурлапа вырса 130—150-шар процент тултарса пычĕ. Машиновед Александр Ильин кунне 4,5 гектар вырăнне 6 гектар, машиновед Федор Егоров комсомолец 8-шар гектар вырса пычĕç. Егоров юлташ машинăпа кунĕн-çĕрĕн вырнă, унăн машини талăкра 18 сехет ытла ĕçленĕ. 3-мĕш бригадăри Феодора Краснова юлташ ертсе пыракан звенон план тăрăх 19 гектар тĕштырă вырмаллаччĕ. Çак лаптăка звено 4 кун хушшинче вырса пухнă. Краснова юлташ звени хăйне уйăрса панă участока вырса пĕтеричченех хиртен кĕмен. Çакăн пек ĕçлекенсем колхозра вуншарăн шутланаççĕ.

Е. ТИМОФЕЕВА.

Хăвăртрах ыраш акса пĕтермелле

ЕЛЧĔК, августăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 59 колхозран 31-шĕ ыраш акса пĕтернĕ. Ыраш акмалли плана район 91 процент тултарнă. Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхоз, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлă «Ново-Ишеряково» колхоз, «Марс», «Осоавиахим», «Новый путь», «Красное Знамя», Пушкин, Ленин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те ыраша агротехника енчен пысăк пахалăхпа акса пĕтерчĕç. Пĕтĕм ыраш акнă лаптăкран 72 процентне машинăпа ретĕн-ретĕн акнă. Малтанрах акнă вырăнсенче кĕрхи тырăсем пĕр тикĕс тата лайăх шăтса тухрĕç.

Кăçал ыраш акас тата тырпул пухса кĕртес ĕçре колхозсенче пурĕ 684 вăкăр ĕнепе ĕçленĕ. Майракаллă шултăра выльăхсемпе уйрăмăнах «Осоавиахим», «Комбайн», Пушкин ячĕпе тăракан колхозсенче анлăн усă кураççĕ. «Осоавиахим» колхозра, сăмахран, кашни кунах 28 вăкăрпа ĕçлеççĕ. «КИМ» колхозра колхозăн 9 вăкăрĕпе тата колхозниксен 22 ĕнипе ĕçлеççĕ. Çавăнпа та çак колхозсем кăçал пур ĕçре те малта пыраççĕ.

Анчах та ыраш акас енĕпе, иртнĕ çулхи пекех, «Коммунист», «Малалла», «Авангард», «Вторая пятилетка», «Новая жизнь» колхозсем юлса пыраççĕ. Иртнĕ çул çак колхозсем кая юлса акнине пула калчасем юр айне питĕ вăйсăр кĕчĕç, çуркунне юр айĕнчен имшер тухрĕç тата сивĕпе чылай пĕтрĕç. Тырă тухăçлăхĕ те ытти колхозсенчен начартарах пулчĕ. Иртнĕ çулхи йăнăшсене кăçал тумалла мар, ыраш акас ĕçе халех вĕçлемелле.

П. ЩИПЦОВ.
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Германири Контроль Совечĕн тăваттăмĕш ларăвĕ
Лару çинчен пĕлтерни

БЕРЛИН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Берлинра Германири Контроль Совечĕн тăваттăмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Дуайт Эйзенхауэр генерал председатель пулнă. Унта Совет Союзĕ енчен—Жуков Маршал, Великобритани енчен — Робертсон генерал-лейтенант, Франци енчен—Кельц генерал пулнă. Ларура вĕсен заместителĕсемпе политикăлла советникĕсем те пулнă.

Совет Германин хĕçпăшаллă вăйĕсенче тăнă çынсене çар формине тăхăнса çӳреме чарма йышăннă.

Совет Англие Берлинра аэродром кирлĕ пулнă пирки Великобританипе Совет Союзĕ тунă килĕшĕве çирĕплетнĕ.

Совет Союзĕн представителĕ Германин çар хăватне пĕтерес тата тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен Совета сĕнӳ панă. Контроль Совечĕ çав сĕнĕве, пăхса тухса Контроль Советне доклад туса пама, Координаци комитетне панă.

Контроль Совечĕн членĕсем Германи халăхне чĕнсе калакан хута алă пуснă. Унта Германире Контроль Совечĕ туса хуни çинчен тата çав Совет Германири, чи аслă влаçа хăйĕн аллине илни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

Берлинри конференцин решенийĕсенчен тухса тăракан репараци ыйтăвĕсем пирки Контроль Совечĕ Мускаври Репараци комиссине ямалли çырăва алă пуснă.

Эйзенхауэр генерал председатель пулса ĕçлемелли вăхăт пĕтнĕ.

Сентябрь уйăхĕнче Великобритани представителĕ председатель пулса ĕçлемелле.

* * *

Союзниксен Контроль Совечĕ Германи халăхне çапла чĕнсе каланă:

«Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешнĕ Королевствин тата Франци республикин Вăхăтлăх правительствин Германири хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕсем, пĕрле Контроль Совечĕн членĕсем пулса еçлесе, çакăн çинчен пĕлтереççĕ:

I. 1945 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Германири аслă влаçа Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешнĕ Королевствăн правительствисем тата Франци республикин Вăхăтлăх правительстви хăйсен аллине илнĕччĕ.

II. Тăватă правительство, хăйсем илнĕ çав аслă влаçпа полномочисем тăрăх, Контроль Совечĕ туса хучĕç. Пĕтĕм Германие тивекен ĕçсем тĕлĕшпе аслă влаçа халь ĕнтĕ çав Контроль Совечĕн аллине панă.

III. Кашни главнокомандующи (е унăн ячĕпе) хăйĕн оккупаци зонинчи халăх валли кăларнă çар законĕсем, чĕнсе калавсем, приказсем, указсем, пĕлтерӳсем, правилăсем тата постановленисем пурте çав зонăсенче законлă пулса юлаççĕ.

ДУАЙТ ЭЙЗЕНХАУЭР
Арми генералĕ.
ГЕОРГИЙ ЖУКОВ
Совет Союзĕн Маршалĕ.
БРАЙЯН РОБЕРТСОН
Генерал-лейтенант.
ЛУИ КЕЛЬЦ
Генерал.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕНЕ ТОКИО ÇЫВĂХНЕ ЙЫШЛĂН АНТАРМА ПУÇЛАНĂ

ЛОНДОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Америкăн сывлăшри десант çарĕсем Токио çывăхĕнчи Апуги аэродромĕ çине йышлăн анма пуçланă. Çав аэродром çине кашни икĕ минутран пĕр транспорт самолечĕ анса ларать. Çавăнпа пĕр вăхăтрах Англин 400 тинĕс пехотинецĕ тата Америкăн 1.800 тинĕс пехотинецĕ Японири Иокосука ятлă тинĕс-çар базине пырса аннă.

МОНГОЛИ ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ СОВЕТ СОЮЗĔН МОНГОЛИ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИНЧИ ПОСЛАННИКĔ ПАТНЕ ПЫРСА КАЙНИ

УЛАН-БАТОР, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ Чойбалсан маршал Совет Союзĕн чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ Иванов юлташ патне пырса кайнă. Маршалпа пĕрле Совет миссине Кĕçĕн Хурал Президиумĕн председателĕ Мума-Цендэ, Монголири революциллĕ халăх партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Цеденбал тата ют çĕршыв ĕçĕсенн министрĕн заместителĕ Намсарай пынă. Маршалпа çак çынсем унта Монголи халăхĕшĕн ялан тăрăшнă Совет посланникĕ урлă Совет правительствипе Сталин Генералиссимуса тав тума тата Монголи Халăх Республикин никама пăхăнманлăхĕ пирки В. М. Молотовпа Ван Ши-цзе пĕр-пĕрне нотăсем панине çав тери савănни çинчен каласа пама пынă. Чойбалсан маршалпа Иванов посланник пĕр-пĕрне саламлă сăмахсем каланă, ун хыççăнн вара вĕсем пĕр-пĕрине туслăн калаçнă.

МОНГОЛИ ХАЛĂХĔ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ КИТАЙ ДОГОВОРНЕ ЫРЛАТЬ

УЛАН-БАТОР, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕпе Китай договорне тата вĕсем тунă килĕшӳсене çирĕплетнĕ май тата Монголи Халăх Республики никама пăхăнман çĕршыв пулса тăрасси çинчен Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕпе В. М. Молотовпа Китай Республикин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ванн Ши-цзе пĕр-пĕрне нотăсем панă май, Монголи столицинчи мĕнпур предприятисенче, учрежденисенче тата çар чаçĕсенче ĕнер йышлă митингсем пулса иртнĕ. Митингра тухса калакансем, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче çирĕп мир тăвас ĕçре тата никама пăхăнман Монголи государствине политика, экономика тата культура тĕлĕшĕнчен малалла аталантарас ĕçре Совет Союзĕпе Китай договорĕ историллĕ вырăн йышăнса тăнине савăнса палăртнă.

Митингсем Монголи Халăх Республикин округсемпе районсен центрĕсенче те пулса иртеççĕ.

МАО ЦЗЕ-ДУН КАЛАНИ

ЧУНЦИН, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Чунцинри радио пĕлтернĕ тăрăх, Китайри коммунистсен партийĕн лидерĕсем Мао Цзе-дун тата Чжоу Энь-лай паян Яньань хулинченн Чунцин хулине самолетпа вĕçсе пынă. Вĕсемпе пĕрле США-н Китайри посолĕ Хэрли вĕçсе пынă. Хэрли Яньань хулине Мао Цзе-дунпа тĕл пулса калаçма пынă пулнă.

ЧУНЦИН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Чунцинри радио пĕлтернĕ тăрăх, Китайри коммунистсен партийĕн лидерĕ Мао Цзе-дун çапла каланă: эпĕ Чунцина Китайра мир тăвас тесе, демократилле правительство тума пулăшас тесе тата наци пĕрлĕхне çирĕплетес тесе килтĕм, тенĕ. «Дагунбао» хаçат çакăн пирки çапла çырать: Мао Цзе-дун кунта килни çинчен калакан хыпар Китай çак вăхăтра илнĕ чи лайăх хыпарсенчен юлашки пулса тăрать. Мао Цзе-дун Чунцина пынине ытти хаçатсем те ырласа саламлаççĕ.

НАНКИНРИ ПУКАНЕЛЛЕ «ПРАВИТЕЛЬСТВĂН» ПУÇĔ ПУЛНĂ ЧЕНЬ ГУН-БО ХĂЙНЕ ХĂЙ ВИЛНИ

ЧУНЦИН, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Япони Домэй Пусин агентстви Бэйпин хули çывăхĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, вырăнти хаçатсенче çапла çыраççĕ: Нанкинри халĕ пĕтсе ларнă пукане·лле «правительствăн» пуçĕ пулнă Чень Гун-бо доктор августăн 29-мĕшĕнче ирхине вилнĕ, августăн 28-мĕшĕнче вăл хăйне хăй чиксе пĕтернĕ пулнă.

СОВЕТ СОЮЗĔН РУМЫНИРИ ПОСОЛНЕ С. И. КАВТАРАДЗЕНЕ ХИСЕПЛЕСЕ МИХАЙ КОРОЛЬ ПАТĔНЧЕ ПУЛНĂ АПАТЛАНУ

БУХАРЕСТ, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер пур хаçатсем те çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: августăн 26-мĕшĕнче Михай король тата Елена королева Совет Союзĕн Румынири чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне С. И. Кавтарадзене хисеплесе апатлану тунă. Апатланнă хыççăнн корольпе С. И. Кавтарадзе пĕр-пĕрипе калаçса илнĕ.

АНГЛИ РАБОЧИЙĔСЕНЕ ГЕРМАНИЕ ЯРАÇÇĔ

ЛОНДОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи правительстви Англи аллине куçнă предприятисенче ĕçлеме Германие рабочисем пек тумланнă çынсене нумай ярать. Снабжени министерствин представителĕсем паян Рурта тата Германин ытти вырăнĕсенче ĕçлеме каяс текенсене пĕтĕм Английĕпех пухса çӳренĕ. Англин çар промышленноçĕнче администрацилле вырăнсенче ĕçленĕ çынсене пуринчен малтан илеççĕ, унтан квалификацилĕ рабочисене илеççĕ. Çав çынсен вара Германи заводĕсенче ĕçлемелле пулать. Çав заводсене халь Союзниксен Контроль Комиссийĕ сăнаса тăнипе, мирлĕ продукци туса кăларма майлаштараççĕ.

АМЕРИКА ÇАРĔН ХИСЕПНЕ ЧАКАРАССИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çар министерствин план отделĕн начальникĕн помощникĕ Эдвардс çапла каланă: ситес çулхи июль уйăхĕ тĕлне США çарне 8.050.000 çынтан 2,5 миллион çынна ситиччен чакарма палăртса хунă.

Эдвардс каланă тăрăх, ситес çулхи июль уйăхĕ тĕлне Америка çарĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем çакăн пек вырнаçса тăрĕç: 370 пин çын—Европăра, 830 пин çын—Лăпкă океан çинче, 115 пин çын—Аляскăра тата Караиб тинĕсĕпе ытти çĕрти утравсем çинче, 1.185 пин çын—Пĕрлешӳллĕ Штатсенче, çак шутран 200 пин çын «стратегилле ударлă запас» пулса тăраççĕ.

Чăвашсен педагогика институчĕпе учительсен институчĕ мĕнле специалистсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ

Ытти профессисем хушшинче уйрăмăнах Совет шкулĕн педагогĕ пуласси, коммунизмлă обществăна тăвакан çынсене вĕрентсе хатĕрлекен пуласси—чыслă та пархатарлă ĕç. Чыслă та мухтавлă учителĕн ĕçĕ! Вăл тĕнчери чи малта пыракан ырă шухăш-кăмăлсемпе, марксизм-ленинизм идейисемпе хавхаланса пырать. Çав ырă шухăш-кăмăлсемпе, идейăсемпе вара учитель ачасене пĕлӳ панă çĕрте усă курать. Учитель Совет çыннин астăнне моралĕ сăн-сăпатăн никĕсне хывать, ăна малашне организатор пулма, коммунизм обществи тума пултаракан çын туса хатĕрлет.

Халăха çутта кăларакан кадрсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе пирĕн педагогика институчĕсемпе учительсен институчĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çак институтсем вăтам шкулсем, училищĕсем тата техникумсем валли пысăк квалификацилĕ преподавательсем хатĕрлеççĕ.

Чăваш республикинчи Педагогика институчĕпе учительсен институчĕсем ĕçлеме пуçланăранпа, 15 çул хушшинче, 1.823 педагог вĕрентсе кăларнă. Вăл педагогсем Чăваш республикинчи тата ытти республикăсемпе облаçсенчи шкулсенче педагогсем пулса, хăйсенн ĕçне чыслăн туса пыраççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, институт Отечественнăй вăрçăн 4 çулĕ хушшинче 536 преподаватель вĕрентсе кăларчĕ.

Халĕ институт Шупашкар хулине куçнă пирки институтра вĕренмелли условисем чылай лайăхланаççĕ. Институтăн пысăк çуртĕнче пур 4 факультет та вырнаçать.

Истори факультечĕ Шупашкар хулинчи архивсемпе тата библиотекăпа тăтăшах усă курма пултарать. Кунсăр пуçне институтăн библиотекинче те истори дисциплинисемпе литература нумай, вĕсем хушшинче авалхи пурнăçа кăтартакан питĕ хаклă кĕнекесем те пур. Авалхи истори тата археологи предмечĕсемпе Чăвашсен Наукăпа Тĕпчев институчĕ те, археологи тĕпчевĕсем тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунăскер, пысăк пулăшу пама пултарать.

Чĕлхепе литература факультечĕ те кăçал лайăх условисенче ĕçлеме тытăнать. Факультет, библиотекăпа анлăн усă курнисĕр пуçне, чăваш журналисчĕсемпе, писателĕсемпе, поэчĕсемпе çывăх çыхăну тытса тăрĕ. Çакă вăл, паллах, чĕлхепе литература преподавателĕсем хатĕрлес ĕçре пысăк пулăшу парĕ.

Физикăпа математика факультечĕ, малах асăннă условисемсĕр пуçне, студентсене хальхи вăхăтри производствăпа паллаштарса пырĕ.

Çутçанталăк факультетĕнче вара уйрăмăнах пысăк квалификацилĕ наука работникĕсем ĕçлеççĕ. Çĕнĕ вырăна куçнă май, факультетăн ăнăçлă ĕçлеме пур условисем те пулаççĕ.

Кунсăр пуçне институт наркоматсемпе тата института çывăх тăракан ытти организацисемпе çыхăну тытма шутлать. Çакă вара институтăн вĕренӳпе наукăллă тĕпчев ĕçĕсене татах та лайăхлатма пулăшĕ. Студентсемпе преподавательсем республикăра иртекен канашлусемпе конференцисенче пулни те вĕсен ăс-тăнне нумай аталантарĕ.

Чăвашсен педагогика институчĕн халĕ йĕркеллĕ ĕçлеме пур условисем те пур. Совет çĕршывне институт пысăк пĕлӳллĕ, дисциплинăллă, Тăван çĕршыва чунчĕререн парăннă педагогсем хатĕрлесе парĕ.

З. МИЛОВИДОВ,
Чăвашсен педагогика институчĕн директор заместителĕ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-93, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабсельхорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-73.

НТ 00239 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59 42 п. л.